К84.09(=Чув)
Ю41
Ч-40070

Геннадий ЮМАРТ



# ХАЛАЛ СĂВВИСЕМ

К ф
К84,09(=Чу)
Ю041

Геннадий ЮМАРТ

# ХАЛАЛ СĂВВИСЕМ

кр

Шупашкар — 2003

ДАРСТВЕННЫЙ ЭКЗ.

ББК 8СС (Чув.)
Ю-41

Г.Ф.Трофимов(Юмарт)

Ч - 40070

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Г.Ф.Юмарт. Халал сăввисем. — Шупашкар: «Руссика», 2003. — 52 с.

Ку кĕнекене автор литературăри, ўнерпе культурăри паллă çынсене халаллана сăвăсене кĕртнĕ. Вĕссене сăвăлла литпортретсем теме пулать.

© Г.Ф.Юмарт (Трофимов)

# АВТОРТАН

Халал сăввисем хайласси пирĕнтен тухнă йăла мар. Вăл мĕн авалтанах килет. Турăсене, патшасене, паттăрсене мухтаса сăвă каласси нумай халăхăн пулнă. Акă хамăрăн мăн асаттесем пин те пилĕкçĕр çул авалах Атăл (Аттилăна) вăрçăран çĕнтерсе таврăннă чух мухтав юрри юрласа кĕтсе илни çинчен çырса хăварни те пур. Юлашки ĕмĕрсенче сăвăласси уйрăмах сарăлчĕ. А.Пушкинпа М.Лермонтов пултарулăхĕнче вăл тăтăшах тĕл пулать. Чăваш поэзийĕнче ку енĕпе Петĕр Хусанкай тухăçлă ĕçленĕ. Ун хыççăн Г.Айги, В.Туркай, А.Смолин чылай çырни курăнчĕ.

Халал сăввисем тĕрлĕрен пулаççĕ. Пĕрисем адресатăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне хак параççĕ, теприсем ытларах интимлă юратупа çыхăннă, виççĕмĕшĕсенче сăвва кама халалланине çеç кăтартаççĕ (сăмах унта пачах урăх япала çинчен пырать). Пиллесе çырнисем те пулаççĕ (эпиграмма, шарж т. ыт. те).

Ку кĕнекене литература, ӳнер тата культура ĕçĕнче пархатарлă ĕçпе палăрнă çынсене хакласа çырнă сăввăмсене кĕртрĕм. Вĕсене ярăмласа пичетлени усă курма меллĕрех пулĕ терĕм. Вĕсене сăвăлла литпортрет теме те юрать. Паллах, вĕсем пурте пĕр шайра мар. Хăшне-пĕрне туллинрех сăнланă пулсан, теприсене ик-виçĕ йĕрке е пĕр-пĕр ытарлă сăнарпа ӳкерсе пама тăрăшрăм. Ялан пĕр евĕрлĕ çырни вулакана йăлăхтаратех. Кулленхи вак-тĕвек халалсене, юрату сăввисене кунта явăçтарма кирлех мар тесе шухăшларăм. Паллах, кашни автор хăй лайăхрах пĕлекен çынсем çинчен кăна çырать. Ытти сăвăçăн халалĕсемпе пĕрле вĕсем çак жанр пуянлăхне кăтартса парĕç.

# ПОЭТ ЙЫХРАВӖ

Вăранăр, тапранăр, чăваш ҫыннисем!

*К.Иванов*

Умăмра — Константин Ивановăмăр бюсчӗ,
Сăнӗнче — тарăн шухăш куллен:
«Савнă халăх, ан йăшчӗ, ан юсчӗ, ан тусчӗ —
Патшаран хăраса ан куклен.
Халиччен тӳснине тепӗртак эсӗ тӳсчӗ —
Ăмăрткайăк пек паттăр ҫӗклен!

Тӳсессе чăнахах та тӳсме питӗ йывăр —
Пусарать тӗрлӗрен терт-инкек.
Ҫутталла туртăнса, анлăраххăн ҫул хывăр —
Хăвăра хăвăр туйăр ҫын пек!
Тӗттӗмре, мӗскӗнре, эй, тăванăм, ан ҫывăр!
Иксӗлмен-ха санра та кӗрнек.

Сăмахна, юрруна, тӗррӳне сăнасамччӗ —
Вӗсенче ҫитмӗл ҫичӗ тӗспе
Йăлкăшать ҫивӗч ăс та илем асамачӗ,
Ырă чун ăшăтать ăшшипе.
Вӗсене тимлӗрех упрама ан мансамччӗ, —
Хăватланăн вӗсен сассипе.

Ҫитмӗл ҫичӗ илем йăлтăрса — пурте пайăррăн
Савăнтартăр хăвна, тӗнчене.
Кӗнеке шанчăклах ӗнтӗ эсӗ тупайрăн —
Тек ăна ан ҫитер ӗнене.
Килтӗр хамăрăн Пушкин та, Гете те Байрон,
Сăвăлатăр чăвашăн чунне.

Эй, вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисемĕр!
Кĕрешмесĕр килмест ыр кунçул.
Ĕмĕрхи тымара вăй кӳрсе чĕрĕлсемĕр,
Талпăн, халăх, йышран эс ан юл!
Çивĕчреххĕн янратăр юратнă чĕлхемĕр,
Тĕнченри ăс-халпа туслă пул!

Лăпланмасть сăвăçсен яланхи çак йыхравĕ.
Кам-ха тивĕç ун пек йыхăрма?
Çав йыхрав — чĕрĕ пурнăçăн аслă шыравĕ,
Çавă мар-и çĕклет юррăма?
Тан тапса тухнă пек тухтăр халăх хуравĕ
Пархатарлă малашлăх курма!..»

Иванов сассипе янкăрах шуçăмланчĕ
Пирĕн сăвă тĕнчи терт-хĕнре.
Чăвашри сăвăçсен кĕреки пуянланчĕ,
Ивановăмăр халь те — тĕпре.
Калчаланчĕ чăвашăн çĕр те пĕр таланчĕ,
Ун сасси те янрать тĕнчере.

## МИЛЛИ

Ылхан витсеччĕ сан ятна,
Усал этемччĕ эс, тăшман та...
Хальччен курманччĕ те сăнна,
Мĕн çырнине те вуламан та,
Пытарнăран сăваплăхна
Айвантараххăн сăнарлантăн.

Кăвак хуппи тĕрĕслĕхе
Яр! çутата пуçланă майăн
Тинех тухан ирĕклĕхе,
Саманапа утан пĕр шайăн,
Унпа эс тупрăн пĕр чĕлхе, —
Таймас çĕртен сана пуç тайăн.

Сăну хурчка пек хăруш мар,
Нимле куштанлăх, çăмăлттайлăх
Сапмасть куçран хаяр кăвар.
Шеллевлĕх, ăс çути, сăпайлăх —
Митта пек вашават сăнар
Тухать ума кĕрнеклĕ, стайлă.

Тăван чăваш чун хавалне
Европа çӳллĕшне çĕклесшĕн,
Пĕлес тесе тĕнче халне,
Эс ырă сунăмпа кĕрешнĕ.
Асаттесен аваллăхне
Çунат хушма çунса кĕрмешнĕ.

Пĕлӳçĕ пек нумай пĕлсе,
Эс тĕрĕсрех курма пултарнă.

Каларăн: çынлăха пӳлсе,
Хăв тухăн çынлăхран, мăнтарăн
Тăванлăха хисеплесе,
Чăвашсене шав чăмăртарăн.

Хăй чавнă шăтăкне лексен,
Шур сурăх тирлĕ сăхă кашкăр
Çĕр ылханне уртать иккен
Пĕвӳ çине, ай, вăштăр-ваштăр.
Вĕçне-хĕрне тупас тесен,
Кайран вара çынсем аташчăр.

Таçта çĕрет сан шăмшакку,
Хальччен те канăç тупаймасăр,
Хастарлăхна тăван сăпку
Хака хурассине сунмасăр.
Хĕвеллĕн килнĕ шанчăку
Пăчланчĕ пулĕ сывлаймасăр.

Çапах сӳнмерĕ сан яту,
Вăл ылтăн пĕрчи пек çуталĕ.
Ахальтен мар хушамату
«Йыш-халăх» тенипе пĕр халлă.
Ăшпиллĕ санăн хăвату
Тапса тухать тан тапнăн халĕ.

## ÇЕÇПĔЛ

Ăна асилсессĕн — хĕçсем чанклатса
Хаяррăн ялтраççĕ çеçен хирсенче,
Çураç хăлхана тупăсем ухлатса,
Ача выçăпа макăрать сак çинче.

Кăшлать шелсĕр çулăм чипер çуртсене,
Тусан çулсем тăрăх пал-пал! хăпарать.
Пĕртанлăх юрри Раççейрен тĕнчене
Пур тĕрлĕ юрра хуплас пек сарăлать.

Чăваш çĕрĕ-шывĕ çинче — хурçă сас.
Хĕвеллĕ ыр шанчăк чĕртсе вăл янрать,
Янрать Çĕнĕ Куншăн тăма йыхăрса,
Ав Çеçпĕл мĕлки улăп пек палăрать.

Илтетĕп поэтăн сулмак уттине —
Асар-писер çил те ăна хăруш мар.
Вут-хĕмлĕ ялав çĕкленет çĕр çине,
Юрлать пирĕн Çеçпĕл тăвăллă марш.

## МИТТА ВАÇЛЕЙĔН ВИЛ ТĂПРИ УМĔНЧЕ

Ял айккинчи масар тавра
Тăп-тăпăл симĕсрех карта.
Çӳл йывăç кӳнĕ сулхăнра
Канать илем ăсти Митта.

Чие, виç хурăн та сирень
Çĕкленнĕ ĕнтĕ сарăлса.
Чул юпари ӳкерчĕкрен
Пуç тайрĕ сăвăç йăл кулса.

Хăйне — карта. Лармашкăн — сак.
Чечеклĕ савăтсем, йăран.
Эс поэта куçран пăхса
Пуплетĕн, вăрахчен тăран...

Тăван чĕлхемĕр чысĕнче
Эс куртăн аслă тивĕçе.
Хресчен пек пултăн йыш çинче,
Сăваплăх кӳтĕн çав ĕçе.

Пĕччен тăрса юлсассăн та,
Кайсассăн та вăйран-халтан,
Туптарăн сăвă чунунта,
Упрантăн уншăн чи малтан.

Чăваш хавалĕн управçи,
Илемлĕ ăс кĕвелĕкĕ,
Эс пирĕн тертлĕ çул уççи,
Эс юлмăн тĕксĕм тĕлĕке!

Сахал-и тантăш-шăллусем,
Йăмăкусем те çав йышпа
Мал ĕмĕчĕ илĕртнĕçем
Утаççĕ санăн çуттупа?

Ахаль-и тăтăш сан патна
Килетпĕр кăмăл юрттипе?
Таса металл пек сăввуна
Вулатпăр халь чун туртнипе.

Ивановла та çеçпĕлле
Ян-ян йыхрав чĕнет пире:
Ан юл, чăваш, чунна çĕкле,
Ятна ан çĕрт, тăн-тăн çӳре!

Хунавлă Пăлаçи, тавах!
Эппин, сăпайлă вил тăпри
Пехиллĕ пултăр-и шавах,
Ялан хисеплĕ тăтăр-и?

## НЕСТЕР ЯНКАСА

Хусанкай, Тукташ юратнă
Янкăс сасăллă Янкас,
Ахаль мар сана çуратнă
Шетмĕ енĕ, хамăр кас.

Хыптармарĕ пурнăç сахăр,
Йĕртрĕ ху çуралнă кил.
Пурпĕр саншăн çитрĕ ахăр
Çеçпĕл асăннă пехил.

Çунтăн эсĕ ыр тăвасшăн
Çынсене пур кăмăлтан.
Хамăр халăхăн малашĕ
Саншăн хаклăччĕ ялан.

Тепĕри пулас пулсассăн
Лач! сурса шăпланĕччĕ,
Сывлĕччĕ çеç ассăн-ассăн
Хăйĕн хĕсĕк анинче.

Сăввунта янрарĕ çепĕç
Шетмĕпе Çавал кукри.
Ĕçлĕ çыннăн ыр хисепĕ
Пулчĕ саншăн чун юрри.

Çеçпĕлле хастарлă кăмăл,
Митталла сăпай хавал
Тупăнмарĕ саншăн çăмăл,
Янраймарĕ çеç кал-кал.

Эсĕ хăв чунна сутмарăн —
Çын сутсассăн та хăвна.
Тăтăн тӳрлĕхшĕн патваррăн
Тамăк евĕр вырăнта...

Чи асли тесе виçейĕ
Тĕрлĕ тăрăх хăйне май:
Пăлаçин — Митта Васлейĕ,
Ĕнчĕ енĕн — Хусанкай.

Шетмĕпе Çавал кукришĕн
Чи сумли эсех, Янкас!
Вăрçăччен туптаннă йышăн
Çук сан евĕр хулăн сас.

Сан яту çухалмĕ ĕмĕр
Халăхăм кун-çулĕнче.
Эсĕ — пирĕн асаттемĕр,
Сан яту — чун тĕпĕнче.

## ИВАН ПАТМАР

Иван Патмар чăнах патвар,
Салтак пекех вăшт-вашт, вăр-вар.
Кĕлеткерен — каска юман.
Вăл Яманак ятне яман,
Яман чăваш ятне-чысне,
Упрать вăл халăхăн ăсне.
Куратăн тем те çӳпçере:
Çĕр-çĕр юрра, вун-вун тĕрре,
Ваттин хивре сăмахĕ те,
Е вăйă-туй такмакĕ те,
Çĕр-çĕр юмах та туптару,
Татах тем тĕрлĕ ал çыру.
Çут хĕвелпе Çут кӳл таран
Халап тупмашкăн пултаран.
Ылхан та тĕлĕк, туй йĕрки —
Пурин çинчен те хут тĕрки.
Сĕм авалтан паян кунччен
Чăваш тĕнчи курнать иккен.
Мĕнле йăх пуçĕ Пурçăхан?
Йăпарĕ пурăннă хăçан?
Вĕсен халапĕ эпосла,
Чăн эпосла та сăвăлла...
Хальччен илтмен ахах сăмах
Тупса вулатăн самаях.
Чăваш чăнах маттур тесе
Чуну тăрать хĕпĕртесе...
Анчах та çав ахах-мерчен
Хăй тĕллĕн хăвăрт ĕрчемен.
Ăна тупмашкăн ансат мар.

Ăна пухас тесе Патмар
Миçе уй урлă каçнă-ши,
Миçе çынпа калаçнă-ши?
Ури ырнах ута-ута,
Алли ырнах çырса хута.
Ăна ăшри ăшталану
Куллен пилленĕ йăпану.
Тăван сăмах пуянлăхĕ —
Ун яланхи чун канлĕхĕ.
Тăван сăмахăн кăварне
Ан сӳнтĕр тет вăл ĕмĕрне.
Эппин, хисеп те чыс ăна,
Чăваш ăсне пухакана.
Патвар хунавĕ ӳсрĕ ун.
Ятне ан манăр — Эдисон,
Вăл каснă лартнă ашшĕ пек,
Хĕрсе пурнать ун ĕçĕпех:
Унта çитет, кунта çитет,
Илтмен сăмах юлман-ши тет.
Ăна вун-вунă кĕнекен
Пухса кăларчĕ пĕр-пĕччен.
Вĕсем тăван чăваш ĕçне
Сӳнмешкĕн памĕç малашне.

## САВӐНАТӐП САНШӐН

Анатри пиччемĕр
Час-часах калать:
«Савӑнатӑп саншӑн», —
Тет те йӑл кулать.

Пĕчĕк ĕç тусаҫ та —
Хавхалантарса:
«Савӑнатӑп саншӑн», —
Тет вӑл ал парса.

Ун саламламашкӑн
Мел ялан ҫитет:
Пур ҫыру та сӑвӑ,
Радио, пичет...

Ĕлĕк темĕн марччĕ
Маншӑн ҫак йӑла.
Шухӑшлан та халĕ —
Кирлĕ япала!

Сиплĕ шыв шӑварнӑн
Типнĕ йӑрана
Ыр сӑмах ачашшӑн
Ҫупӑрлать чуна.

Вӑр-варах кураймӑн
Ҫакӑ сиплĕхе,
Тӑтӑшах тĕл пулмӑн
Ӑшӑ пиллĕхе.

Вашаватлӑ кӑмӑл
Тапмасан чунра —

Тав сăмахĕ питĕ
Тупăнмĕ çынра.

Эй, Васлей пиччемĕр,
Халь калас килет:
«Савăнатăп саншăн,
Кур телей-тивлет!

Тивĕç эсĕ ху та
Халăхăн тавне.
Ватăлсан та йатрăн
Яшлăх ялавне.

Çыртăн çĕр-çĕр сăвă
Ырă хавалпа,
Юхрĕ çĕр-çĕр юрă
Санăн сăввупа.

Шăрçаларăн повесть,
Асилӳ, юмах...
Чăвашра вăл юлĕ
Ырăлăх пухма.

Темиçе кĕлте те
Пулчĕ сан тырру —
Ырă кăмăлу-тăр
Кӳчĕ ăнтару.

Тав — Митта Васлейĕ
Хунă шанăçа
Чыслăн та хастаррăн
Кĕртрĕн пурнăçа!»

## ГЕННАДИЙ ВОЛКОВА

Вилнĕ, пĕтнĕ теççĕ улăпсем,
Юлнă тăприсем, çĕр куписем...
Ĕненес килмест çак сăмаха.
Тимлĕрех пăхсамăр çывăха:
Халĕ те вĕсем пурнаç иккен,
Çитĕнсех тăраç чăвашсенчен.
Çул хывать пĕри çӳл тӳпене,
Тишкерет тепри авалхине,
Виççĕмĕш тĕпчет эреш-тĕрре,
Хăш-пĕри сăнать чĕлхемĕре...
Улăпсем пур чух — пурнать чăваш,
Унăн пулĕ паттăрла малаш.
Халь пĕрне илер-и мухтаса?
Чăннипех вăл тивĕçлĕ чыса.
Кашкăр Хуначи текенскере
Сахал мар пĕлеççĕ тĕнчере.
Нимĕçпе якут, хакас çынни
Ăс ыйтса пĕлет унран çĕнни...
Пĕчĕк Хуначи пĕррехинче
Ларнă улăп тĕмески çинче.
Сасăпа калать сисмесĕрех:
«Эх, пуласчĕ улăп евĕрех...»
Ак хайхи такам çĕр айĕнчен
Сас парать: «Ăс пух ваттисенчен.
Ăспала çĕнтерĕн эс хĕçе,
Пуринчен малтан пуç тай ĕçе...»
Улăпа ача итленĕ тет,
Хушнине тума пикеннĕ тет,
Çак ĕçпе ялан супа-супа



НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
Ч-40070

Хăй те тухнă чаплă улăпа.
Пухнă вăл чăвашăн ăс-хăлне,
Пынă ăнтарса ун ĕç-хĕлне.
Сиплеме вĕрентрĕ пурнăçа
Пуç тайса ĕçе те тăнăçа.
Пархатарлă ĕмĕрхи йăла
Пытăринччĕ терĕ малалла.
Хамăрлăх — чăвашлăх тымарне
Татăлма ан парăр ĕмĕрне!..
Çакăн пек янрарĕ пилĕ ун,
Çав пилпе пайтах вăй илĕ чун.
Хуначи пичче, тавах сана,
Турă сывлăх патăрччĕ кăна...
Улăпсем пур чух — пурнать чăваш,
Унăн пулĕ паттăрла малаш.



4-40070

## ВАЛЕМ АХУНА

Юрать-ха вăхăт чан çапать, —
Ун сассине илтмен чухне
Чун иртĕхет канăçлăхпа,
Лăштах яран тилхепине.

Татах çил кастăр çилçунат,
Çитертĕрччĕ çитмен çĕре.
Ĕçре ăсталăх туптанать, —
Унпа çеç тухăпăр тӳрре.

Ӳпкев илтмелĕх те сăлтав,
Тен, тупăнĕ юррăмăрта.
Хăш чух тепри каламĕ тав,
Тен, айăпĕ те хамăрта.

Тиркев те пулăштăр пире
Тарма суя ăнлануран.
Хевте сахал-и чĕрере —
Вăл килчĕ пуль саманаран.

Упрарăмăр пур-çук вăя
Кун панă халăхшăн кӳме.
Ямарăмăр питех сая
Чунри сăваплă вут-хĕме.

Тăван сăмах, тăван йĕрке,
Мĕн ĕлĕкрен килен пехил —
Çак пирĕн аслă кĕнеке,
Çĕтме тивсен вăл — вырт та вил.



НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Пайтул, Сеит, Шăмпай, Эльмук —
Йăлтах эс чĕртрĕн вилĕмрен.
Вĕсен ятне тек манас çук,
Татах чапланĕç ӳлĕмрен.

Эппин, çак уçă варкăшра
Юртар-и çивĕч те кал-кал?
Тен, вăхăчĕ сахал умра —
Йӳçсе хăпартăр пирĕн хал!

## АНАТОЛИЙ ЮМАНА

Ют ҫӗр мар ҫав Чӗмпӗр енӗ
Чӑнлӑран Эврел таран.
Чӑвашсем кунта тӗпленнӗ
Лаптӑк-лаптӑк, хушӑран.

Муталарӗ саманамӑр
Сывлама пӑчӑхтарса.
Хамӑрлах юласчӗ хамӑр! —
Терӗн нӑкӑрах тӑрса.

Тепӗри алла уссан та,
Хирӗҫсессӗн те санпа —
Хӑрамарӑн, тымарлантӑн,
Пурӑнтӑн пӗр ҫав халпа.

Хӗрӗх ҫул — хӑех пӗр ӗмӗр,
Шав шаккарӑн сунтална:
Ан шӑплантӑрччӗ чӗлхемӗр,
Таптама ан пар чунна!

Эсӗ, Чӗмпӗрӗн юманӗ,
Чӗмпӗр ен чӑвашлӑхне
Пултӑн тулӑх упраканӗ,
Сӳнтермерӗн вучахне.

Тавтапуҫ та тайма пуҫӑм,
Паттӑр чунлӑ ыр чӑваш!
Тымару ан хӑртӑр, тусӑм,
Ҫамрӑк пек ҫӳре вӑш-ваш!

## ГЕННАДИЙ АЙХИНЕ

Шутламанччĕ, тĕлленменччĕ
Утмăла çывхарасса.
Чул хушши чуну çĕкленчĕ
Тӳпене, çунат сарса.

Пӳлĕхе пуçа пĕкер-и
Ăшă пиллĕ кăмăлпа?
Тен, вара пире çитерĕ
Çитмĕле те çак халпа.

Пулнă пулĕ усалли те
Арăш-пирĕш пурнăçра.
Вăл ĕçе сăваплăх витĕ
Хамăр чыслăха кура.

Çĕнĕ çул тупса йĕрлерĕн,
Эс каларăн çĕн сăмах.
Çав çулпа вуншар-çĕршерĕн
Тытăнчĕç утса пыма.

Пайтахчен хĕрсе вĕретĕр
Ыттисемшĕн пархатар.
Хăв чунна та пехиллетĕр
Тивлетне тăварлă тар.

Тĕнчене хăй кӳнĕ ĕçшĕн
Илттĕр тивĕçлĕ ята.
Чăваша татах çĕклесшĕн
Талпăнса утар тата.

## ПРАСКИ ВИТТИНЕ

Хаяр вӗлтрен вӗтсессӗн те,
Вӗлтрен ҫисе ӳссессӗн те
Писмерӗн тӑлӑх аннӳрен,
Тармарӑн эс тӑван ҫӗртен.
Шӑпах ҫав юрату сана
Савма вӗрентрӗ ҫӗр-шывна.
Шӑпах та ҫавӑн пиркиех
Хуйху та унӑн хуйхиех.
Ҫавна пулах чӑваш тӗррин
Асамлӑхне эс ялтӑрин
Ҫиҫтертӗн ҫичӗ тӗспеле
Тӗнче пӑхса тӗлӗнмелле.
Чӑвашӑн чунӗ те шӑпи,
Чӑваш илемӗ те хапи
Унта курнать мӗн ӗлӗкрен,
Ӑна кӑтартрӑн эс хиврен.
Хӑв май сӑмах, хӑв май ӑслай
Тупма пултартӑн эс чылай.
Выртать-мӗн ҫулӑмӑр инҫе —
Хӗн-хурлӑх, шухӑш хушшинче.
Ҫут ҫӑлтӑр витӗр телейне
Чӑваш ҫитмешкӗн тӗлленет.
Сыхлатӑрччӗ ӑна турри, —
Кураймӗ унсӑр ним ырри.
Эпир ҫав ҫиттӗрччӗ тесе
Ӗҫлер ӳпкевсӗррӗн хӗрсе.
Хӑш чух, тен, тухӑн сумсӑра —
Ӗҫӳ ҫеҫ юлтӑр халӑхра,
Ҫав майӑн ҫӗрмӗ сан яту,
Унпа пӗрлех — чӑн юрату.
Эс хӑв та курӑн пархатар,
Йытта ҫырттармӗ пихампар.

## НИКОЛАЙ ТЕВЕТКЕЛЕ

1

Савăн, савăн, Микула,
Ху аван çырнишĕн.
Пит ан тарăх, ан хурла
Çын айван çырнишĕн.

Пĕр пекрех çырас пулсан
Айванрах эс курнăттăн.
Эс хивре çырас пулсан
Аванрах эс курнăттăн.

Чап шăв-шавĕ — хĕвĕшӳ,
Анрашу, айванлăх.
Сан хĕрӳллĕ шухăшу
Упранать яланлăх.

Ятлаçса ывăниччен
Ил-ха кирлĕ тема.
Çыр-ха Яковлев çинчен
Вирлĕрех поэма.

2

Сан чĕлхӳ вут-хĕм кăларĕ.
Харсăр — канăçсăр чуну.
Сахал мар вăл сăвăларĕ,
Иксĕлмест хавхалану.

Сан тĕнчӳ пуян та аслă,
Вăл Йĕпреç вăрманĕ пек
Янраса тăрать çĕр саслă,
Хамăрла сулăмĕпе.

## РАИСА ФЕДОРОВА АКТРИСĂНА

Сан чӳречӳ умĕнче
Çĕмĕрт шур чатăр пĕркеннĕ.
Унăн чечен тĕрринче
Сан сăнару эрешленнĕ.

Чирлĕ выртать-и аннӳ
Вырăн çинчен тăраймасăр,
Шанчăклă тенĕ çынну
Иртрĕ-и ним уямасăр —

Сулхăн çанталăк чухне
Ăшăтĕ лăпкă йăл-кулă;
Сан чун-чĕрӳ хуйхине
Палăртмĕ вăл нăйкăшуллă.

Ху кӳрекен пархатар
Кӳтĕр хăвна та йăпанăç.
Сан сассунта сахал мар
Куртăм хĕвеллĕ савнăç.

Камшăн — илемлĕх турри,
Камшăн ĕçчен ырă амăш —
Çак тĕнчере эс пурри,
Санăн ултавсăр хăтланăш.

Çитĕнтĕн кӳршĕ ялта,
Пĕр ӳсĕмрех çунăхатăн.
Çавăн пирки-ши тата,
Чăн тăван пек туйăнатăн.

Вăрçă хирсен те пире,
Тапрĕ илемĕн çăл кусĕ.
Хӳхĕммĕн ӳсрĕ чĕре,
Ташă та вăйă çул усĕ.

Ĕнтĕ манран çӳлерех
Санăн сăваплăх çĕклемĕ.
Эс урамра е ĕçре —
Çынлăх, хитрелĕх элемĕ.

Кĕтнĕ хĕр-тус кăмăлне
Сан сассунта асăрхарăм.
Драма вылянă чухне
Пултăн эс паттăр хĕрарăм.

Чун илемне кăтартма
Çепĕçлĕх çеç-и пит кирлĕ?
Тивĕçлĕрен хăтарма
Хурçă пек тăрăн эс вирлĕ.

Халăхăм пӳрнĕ илем
Халăхшăн йăлтăр çуталĕ.
Чĕрлĕх чĕртен вут-хĕлхем
Мĕншĕн-ха уссăр çухалĕ?..

## ВИТАЛИЙ ЮМАРТА

Тăванăмçăм Витта,
Эс маншăн — чăн Митта.
Усал сунмастăн çынсене,
Илем кӳретĕн тĕнчене.
Эс юратан тӳрĕлĕхе,
Пуçна таян чиперлĕхе.
Чăваш илемĕн çӳпçинче
Куратăп санăн çут ĕнче.
Сăпайлă, шухăшлă сăмах
Хĕртсе тăрать ман асăма.
Ăна шăратрăн çынлăхпа,
Чунлăхпала та чăнлăхпа.
Ыр вăрлăх акрăн темĕн чул,
Вăл пулчĕ пирĕн ылтăн-мул.
Хура ĕçе хисеп туса,
Таса упратăн эс чыса.
Тӳсме тивет-и мăшкăла —
Тăратăн танлăн, митталла.

## АЛЬБЕРТ АЛЕКСАНДРОВ
## ПРОФЕССОРА

Чи маттур вĕренекенччĕ
Эс вăтам шкулта чухне.
Эс пулмастăнччĕ ӳркенчĕк,
Туйнă çыннăн тивĕçне.

Вĕренмешкĕн хĕн килсен те,
Хуçăлми çӳреттĕнччĕ.
Чи малта утса çĕклентĕн
Комсомол ĕретĕнче.

Çунатна вăл карăнтарчĕ,
Пиллĕх пачĕ вĕçевре.
Кулач мар ун чух хыптарчĕ
Вăрçă ахрăмĕ пире.

Талпăнаттăмăр çĕр-шывăн
Ят-сумне çĕклес тесе.
Шав хистетчĕ чун: ан ывăн,
Ан çӳре сĕнкĕлтетсе!..

Сан çинчен илтетĕп халĕ
Мухтакан хыпар-хăнар:
Сан ĕçӳ пырать кал-каллăн,
Хусанта эс сумсăр мар.

Эс — ят илнĕ чăн тĕпчевçĕ,
Ĕç-хĕлӳ çĕр-шывăма
Вăй хушмашкăн тивĕç теççĕ,
Эс ăста тет ăслама.

Хулара пурнан пулсан та,
Эс манмастăн Янкасна.
Çавăнпа кирек хăçан та
Чыс тăватпăр сан ятна.

## ПЕТР АНДРЕЕВА

Юрă Петĕрĕ темелĕх
Йăрăлăх кăтартрăн:
Пĕтĕм халăхăм илтмелĕх
Юрă янăратрăн.

Тĕрлĕрен çĕрти чăвашăн
Юррипе такмакĕ
Юхрĕ сумлăн та ачашшăн,
Пысăк пулчĕ хакĕ:

Юррисем нумай-мĕн пирĕн,
Юрăçсем те йышлă.
Эфира халь каçăн-ирĕн
Юрă тухрĕ чыслă.

Кайăк çеç-и, юрă çеç-и —
Эсĕ те çунатлă.
Тĕнчипе сана итлеççĕ,
Кăмăлу — ынатлă.

Санăн сассуна ян! кайрĕ
Юррăмăр мухтавĕ.
Ĕнтĕ çӳлерех курнайрĕ
Чăвашсен ялавĕ.

Юрласах çӳретĕн пулĕ
Тĕлĕкре те эсĕ.
Юррунта — чăваш кун-çулĕ,
Чун ăшши те ăсĕ.

# ТĂХТИ ТĂХĂМĔ

*Ю.Артемьева*

Пуранна, тет, ĕлĕкрех
Тăхти текен такмакçă:
Такмаклама тытăнсан,
Такăнмасăр калана;
Çил арманĕ евĕрлĕ
Хăлаçланса-суллашса
Такама та такранах
Тĕлĕнтерсе пĕтернĕ.
Пултарнă, тет, çав этем
Кулман çынна култарма.
Туя-мĕне кайсассăн,
Çĕçĕпеле выляса
Кутăн-пуçăн сикнĕ, тет;
Автан пек те авăтса
Кăтартмашкăн ÿркенмен.
Гитлер йышши йĕксĕке,
Бюрократа-сĕмсĕре
Тĕм-тĕкĕрех тустарнă.
Ăна çитес паттăр çын
Питĕ сайра пулнă, тет.
Халĕ ун пек этемсем
Пĕтнĕ тесе калаççĕ.
Анчах эп çав хыпара
Ĕненместĕп пĕрре те.
Таçта мар, Шупашкартах
Куркалатăп пĕр çынна —
Уртей мучи мăнукне.
Тăхти тавраш евĕрлех

Çав çын мана туйăнать.
Кукша пуçлă пулмин те,
Тăхти пилне илнĕ пуль:
Ун аслашшĕ Тăхтипе
Паллашнă, тет, пасарта:
Иккĕш, çĕлĕк çавăрса,
Кĕнекесем сутнă, тет.
Уртей мучи мăнукĕ
Халсăр çынна курсассăн,
Курмăш пулса иртес çук,
Хастарлатма сăмахĕ
Таçтан тухса тăраять:
Чипер, лăпкă пуплесех
Çын танлăхне систерет,
Тĕрĕс сăмах калама
Никамран та хăрамасть,
Хăрасан та — палăртмасть,
Çурăм хыçне пытанса,
Йывăр ĕçрен пăрăнмасть.
Пÿтсĕр-йĕксĕк этеме
Кăшт йĕплесе илет те —
Лешĕ мăштах шăпланать.
Апла-капла суякан,
Элекçĕпе ултавçă,
Наян çын та вăрă çын,
Хăйсемшĕн çеç çунакан
Кашкăр чунлă çăткăнсем
Юратмаççĕ, тет, çакна.
Ăсла тухма хăйсене
Çутçанталăк пÿрментен
Шурă куçпа пăхаççĕ,
Нимĕн тăва пĕлмеççĕ.

Çапла Тăхти тăхăмĕ
Çивĕч ăспа çиçнĕ чух
Юлмĕ чăваш мĕскĕне.
Ахальтен мар яш-кĕрĕм
Уртей мучи мăнукĕн
Такмакĕпе халапне
Çăвар карса итлет, тет,
Çавна май вĕсен чĕлхи
Çивĕч çава евĕрлех
Туптанмашкăн тытăннă.
Хăшĕ-пĕри ватти те
Унăн ырă канашне
Йăпăрт чикет хăлхана.
Çавăнпа та йăрă çын
Кӳршĕсемпе ăмăртма
Сапантуя каять, тет,
Шикленмест, тет, нимĕн те —
Тăхти пек такмакласа
Тĕлĕнтерет тĕнчене,
Савăнтарать çынсене.

## ЮРИЙ СЕМЕНТЕРЕ

Сементер — юмахри феникс кайӑк, вӑл хӑйне вутра ҫунтарса яма, кайран хӑй кӗлӗнчен чӗрӗлсе тӑма пултарать.

*Азербайджанларан*

Сементер — асамлӑ кайӑк:
Хӑй пӗтсессӗн те ҫунса,
Чӗрӗлсе тӑма пур майӗ,
Кайӗ вӑл ҫунатланса.

Чӑвашра пӑртакҫӑ пур-тӑр
Ҫавӑн пек сӳнми хӑват...
Мунча пек ларатчӗ пӳртӗр —
Тӑван енӗн ҫил хӑвать.

Терт-хӗне тӳсме пӗлнишӗн
Танлӑх тапрӗ сӑнунта.
Нӑйкӑшмастӑн эсӗ нишлӗн,
Ху выҫах пулсассӑн та.

Чун асапӗ, ҫын инкекӗ
Хывӑнать сӑвва-юрра.
Хушӑран-и савнӑҫ лекӗ —
Хӗпӗртен хӑвна кура.

Пӳрнӗ пурӑнӑҫ телейӗ
Ҫичӗ хут вара паха.
Купӑс тытӑн — вӑл пӗлейӗ
Йыхӑрма ыр сӑмаха.

Шетмĕ ен ĕçченĕ çеç-и —
Пур çĕрти чăваш çынни
Юррунта халь сăн илеççĕ,
Вĕсенче — чĕре çунни.

Алăра пурин те пирĕн
Хамăра кура ялав.
Пăрахмасть пĕри каç-ирĕн,
Теприне пусать юлхав.

Ялавпа утса пырать-и —
Аякран пăхма ансат.
Тĕрлĕ çил ăна аптратĕ
Ӳппĕн-тӳппĕн çаврăнса.

Калаçма эпир чăлах-им? —
Кашниех ăста, хастар.
Чăнлăх-тĕрĕслĕх сăмахĕ
Имшертен çук пархатар.

Шаннă ĕмĕт çитмесен те,
Вăл кайсан та харама,
Чĕрĕлме тӳр килтĕр ĕнтĕ
Ӳлĕм пирĕн тăхăма.

Çын чунне çемçетĕ çынлăх,
Çынлăх — ют суялăха.
Çакă пултăр пирĕн чăнлăх,
Вăл пистермĕ халăха.

## ГЕОРГИЙ ФЕДОРОВА

Уҫăп ывăлĕ Якур
Тем тумашкăн та маттур:
Шĕкĕлчет вăл сăввине,
Тишкерет вăл романне,
Хăй те сăвă сăвăлать.
Философ пек вăл ăслать.
Унăн хастар чĕринче
Юрă-кĕвĕллĕ тĕнче.
Ҫавăн пек ҫынсем пур чух
Сан чуну ҫĕкленĕ ух!
Халь иккен вăл аллăра,
Кунсерен вăл палăрать:
Ҫĕнĕ сăвă-тишкерӳ
Шăратса парать хĕрӳ.
Ҫук, мăнтарăн мар Якур,
Кур, унра кĕрнеклĕх пур.

## ФЕДОР МАДУРОВА

Хайларăн алăпа вун-вунă палăк
Вун-вунă çул хăвна сума сумалăх.
Вĕсем курнаççĕ улăпла маттуррăн.
Юратнă халăхна çапла чыс турăн.
Сăваплă ватсене чĕртсе тăратрăн,
Сăваплă ватă пек хăвна кăтартрăн.
Чăвашăн хĕрĕсем утса юрлаççĕ
Чăвашăн арĕсем пире сыхлаççĕ.
Кĕлленнĕ хулара юпа çĕкленчĕ,
Чăваш тĕррипеле вăл эрешленчĕ.
Асаплăх палли пек çӳле кармашрĕ,
Яланлăх çурта пек аса вырнаçрĕ.
Кĕреш юман палăкусем кĕрнеклĕ,
Ăна кура чунăмăрсем тĕреклĕ.

## ПЕТĔР ЭЙÇЫНА

Юратмастăн нумай калаçма,
Пулсан пултăр — ĕçлĕ сăмах.

Саншăн халăх хавалĕ — сăвап,
Эсĕ чыслăн тытатăн явап.

Мулпа чапшăн тухмастăн ăсран,
Сыхланатăн усал тăвасран.

Нумаях пухăнмасть сан сăвву,
Анчах çутă çав чăнлăх, саву.

Ахаль мар хапăллать пысăк йыш:
Чăваш, вырăс та нимĕç, латыш.

Шав аса илтерен çынлăха:
Ан кĕрсемччĕ, этем, çылăха!

Хăв ырра туртăнса тăнăран
Ыр яту нихçан хăпмĕ санран.

Хайлаву чăннипех — ыр вучах,
Çук, сӳнмешкĕн вăл пĕлмĕ пачах.

## Алексей Аттил

*В.Пехиле*

Вулатăп йĕрсе Аттила,
Татах та вулас килет.
Сăвви пĕçертет кăмăла,
Сăвви — чăн илем те тивлет.

Яр! çиçĕм хăвачĕ — унра,
Шар! çутă шартать те чуна.
Çути унăн сӳнмĕ санра,
Пĕччен вăл хăвармĕ çынна.

Сăпайлă этем тӳсĕмне
Тӳсме хăнăхатăн каллех.
Куратăн кун-çул тупсăмне,
Пурнатăн ун пек — хресченле.

Çӳлти ăмăрткайăк çĕре
Лапах персе анчĕ иккен.
Ун пек вичкĕн куç, вут чĕре
Часах сас параймĕ пиртен.

Юратнă поэзи, хӳхле!
Куç хупрĕ ятна çĕклес чун.
Тус-ыйшăм! Хастарлăн çĕкле
Эс ун çĕклемне куллен-кун.

## ÇУЛ УÇАКАН

*В.Эртивана*

Силпи çырми вăрманлă,
Шывĕ юхать шарласа.
Унта пĕр йĕкĕт аннă,
Çаврăнчĕ тем шыраса.

Ах, шывĕ тăрă, уçă!
Ахаль мар ĕрчет кĕркке.
Пĕр кукăртах çăл-куçĕ
Çитет те пуль хĕрĕхе.

Пал-пал тапса тăраççĕ
Пĕр хысак айĕпеле.
Чулсем юхма чараççĕ
Юхăм шыв ытамнелле.

Тулса каять кӳлленчĕк,
Йывăр тӳрĕрен юхма.
Вĕсен умне кукленчĕ
Йĕкĕт çĕнĕ йĕр хывма.

Çанна-пĕççе тавăрнă,
Тасатать çăл-куççене:
Çулĕ пулмĕ çаврăнăç
Пысăк юхăм шыв патне.

Çарран тăмашкăн сивĕ,
Савăнать çапах пăхса:
Юха пуçларĕ шывĕ
Туллирех те васкаса...

Чул хушшинчи чăвашлăх
Аран сывлать халăхра.
Çул уçмасан — малашлăх
Ларĕ сӳнсе пăчлăхра.

Мухтав, эппин, тăванăм,
Çул уçакан этеме!
Ăна пулах упранăн,
Эс çухатмăн илеме.

## АЛЕКСАНДР ВАСИЛЬЕВА

Чăваш юрри йĕрсен те —
Вилмерĕ вăл, пĕтмерĕ.
Сан юррупа халь ĕнтĕ
Çитменнине çитерĕ.

Каçса кайса юрлатпăр
Е татăлса йĕретпĕр,
Пĕр тарăхса хурлатпăр
Е паттăррăн çӳретпĕр.

Сан кĕввӳнте пур халĕ
Вут-юрату асапĕ,
Асаттесен халалĕ,
Чăвашăн çулĕ, чапĕ.

Чуна хыпса илейĕ
Сассун хĕрӳ кăварĕ,
Курман телей пиллейĕ,
Вĕри куççуль кăларĕ.

Çӳçентерӳллĕ кĕвĕ
Тĕнче тавра çул уçĕ.
Курнатăн улăп евĕр,
Чăваш юррин Алмушĕ.

## АНАТОЛИЙ ЫХРАНА

Тăванăм, ан кулян, ан хуçăл
Хисеп тивĕçменрен хăвна,
Юратнă ĕçӳнте эс уçăл,
Пусар ӳпкевлĕ кăмăлна.

Çил пек иртет суялăх чапĕ,
Эс ан ăмсан ун ырлăхне.
Ĕçре кăна этем сăвапĕ,
Ан кĕр мухтавăн шурлăхне.

Хавхалану кăна упрантăр,
Хĕвĕшӳрен ялан эс тар,
Айван çынсен йышне эс ан тăр
Пин хут та курăн пархатар.

## АТНЕР ХУСАНКАЯ

Пурӑннӑ тет ӗлӗкрех
Атнер текен пӗр улӑп,
Чӑвашсене хӗнлӗхре
Хӳтӗленӗ хӑюллӑн.

Тӗрӗслӗхшӗн тӑнӑран
Икӗ питлӗ куштансем
Ӑна питӗ курайман,
Тапӑннӑ шавах вӗсем.

Санӑн тӳрӗ кӑмӑлу
Юлнӑ пуль улӑпранах,
Ҫакӑ вичкӗн ӑнтӑлу
Пӗрлештерет халӑхна.

«Чӑмӑртанӑр, чӑвашсем!» —
Тенӗ харсӑр халала,
Хупласан та сив ҫилсем,
Янӑратрӑн малалла.

## ХĂЛАТ

*Яккусен Петĕнее*

Тăм тăвайкки тăрринче
Сентти шăллĕ пĕринче
Хăлат чĕппи тытнă та
Илсе пычĕ ман пата.
Мана вăрттăн кăтартать:
«Мĕн тăвар?» тесе ыйтать.
«Тутлă çитĕр» терĕм те,
«Çӳлте вĕçтĕр» терĕм те,
Тухса кайрĕ хай ача.
Çакна манман вăл пачах —
Ӳстернĕ-мĕн чĕппине,
Вĕçтернĕ-мĕн тӳпене;
Ял-хуламăр çийĕпе
Ярăнса йăр-йăр иртет,
Çынсене вăл илĕртет.

## СТАНИСЛАВ ЮХТАР
## КАРТИНИСЕМ

Ту евĕр тухьясем,
Çил пек урхамахсем,
Тетте пек хуласем,
Мăнаçлă йăласем
Тĕтреллĕ сĕмлĕхрен,
Таçти инçетлĕхрен
Тухаççĕ ăнтăлса,
Тăраççĕ çуталса
Асамлă вăй-халпа,
Сăваплă кăмăлпа.
Аваллăх мĕлкисем —
Чăвашлăх ĕлкисем,
Вилмен иккен вĕсем,
Маттур асаттесем!

## МУСА ДЖАЛИЛЕ

Чун-чĕрӳ кăварĕ
Кăлăхах çунмарĕ;
Парăнмарĕ сăнчăра,
Вăл паян та ялтăра.

Çакăнта илемĕ,
Çиçĕмле хĕлхемĕ
Тукайпа Тукташ чĕлхин,
Сӳнес çук вăл халĕ тин.

Савнă халăхушăн,
Ирĕклĕ кун-çулшăн
Хĕçпеле те сассупа
Эс кĕрешрĕн тăшманпа.

Çавăнпа хăватлăн
Çăлтăр пек çуталăн,
Малашне те эс пире
Парăн вăй кĕрешӳре.

## ÇИТĔН, ТУСЛĂХ ЙЫВĂÇĔ

*Улдис Берзиньша*

Райнис çĕрĕнчи пĕлеш-тус
Ăшшăн хапăлларĕ, хастарланчĕ
Чăвашсен илемлĕ сăмахне
Латышсемшĕн йывăç пек чĕртмешкĕн.
Курчĕ вăл унта ĕлккен тĕнче —
Чун-чĕре илемĕпе тĕрекĕ,
Çынлăхпа тăванлăх туйăмне.
Çав ятпа эп асăнмалăх илтĕм
Латышсен юратнă йывăçне.
Чăвашра ӳсме ăна пиллерĕ
Çĕнĕ тусăм ырă кăмăлпа.
Çитĕн, çитĕн эсĕ, Латви хырĕ!
Эп тăрам çĕрне хусăкласа,
Тухăп ытлă-çитлĕ шăвармашкăн.
Сарăл, çĕкленсе çӳлтен-çӳле!
Эс йăмра пекех пул чĕрĕ, харсăр,
Кайччăр чăшăлах тымарусем.
Çĕн илем кунта кӳрсемччĕ эсĕ,
Алла-аллăн çитĕн йăмрапа!

## СĂВĂÇСЕМ – ПĔР ТĂВАН

*Л.Робельпе П.Франса*

Пĕтĕм сăвăç тĕнчере
Палăртать пĕр туртăма:
Сăхланмасть вăл ют çĕре,
Пар çеç ирĕк пурăнма.

Савнă халăх, савнă çĕр,
Ытарми тăван чĕлхе –
Пĕр çакна çеç канăçсăр
Вăл ыйтать ĕмĕрлĕхе.

Çавăнпа та пĕр-пĕрне
Хĕнемеççĕ ĕмĕртен,
Тĕрлĕ халăх юррине
Ĕнĕрлеççĕ чĕререн.

Çавăнпа Митта пичче
Алă тытрĕ Бернспала,
Вăл Бодлер вил тăпринче
Тупрĕ ырă кăмăла.

Акăлчан-и е француз –
Пуç таять Иванова.
Çынлăха юратнă тус
Кĕмĕ чăрсăр тав-шава.

## ТУПМАЛЛИ


| | |
|---|---|
| Автортан | 3 |
| Поэт йыхравĕ | 4 |
| Милли | 6 |
| Çеçпĕл | 8 |
| Митта Ваçлейĕн вил тăпри умĕнче | 9 |
| Нестер Янкаса | 11 |
| Иван Патмар | 13 |
| Савăнатăп саншăн | 15 |
| Геннадий Волкова | 17 |
| Валем Ахуна | 19 |
| Анатолий Юмана | 21 |
| Геннадий Айхине | 22 |
| Праски Виттине | 23 |
| Николай Теветкеле | 24 |
| Раиса Федорова актрисăна | 25 |
| Виталий Юмарта | 27 |
| Альберт Александров профессора | 28 |
| Петр Андреева | 30 |
| Тăхти тăхăмĕ | 31 |
| Юрий Сементере | 34 |
| Георгий Федорова | 36 |
| Федор Мадурова | 37 |
| Петĕр Эйçына | 38 |
| Алексей Аттил | 39 |
| Çул уçакан | 40 |
| Александр Васильева | 42 |
| Анатолий Ыхрана | 43 |
| Атнер Хусанкая | 44 |
| Хăлат | 45 |
| Станислав Юхтар картинисем | 46 |
| Муса Джалиле | 47 |
| Çитĕн, туслăх йывăçĕ | 48 |
| Сăвăçсем — пĕр тăвансем | 49 |

ЮМАРТ(Трофимов)
Геннадий Федорович

Стихи-посвящение

На чувашском языке

Редактор И.Г.Трофимова
Компьютерный набор и верстка Л.С.Богатеева

Сдано в набор 10.07.2003. Формат 60х84/32. Усл.п.л.
Тираж 300 экз.